*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

32 (2619) №
Хакĕ ирĕклĕ

# Хресчен сасси

2016
çурла
18

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН

КУН ЙĔРКИНЧЕ

Иртнĕ эрнере Чăваш Ене РФ ял хуçалăх министрĕн пĕрремĕш заместителĕ Джамбулат Хатуов килсе кайнă. Вăл «Акконд-агро» фирма тата «Юрма» агрохолдинг ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă. Сĕт, аш-какай туса илессине сÿтсе явнă.

Раççейре 8 млн тонна сĕт çитмест. Пысăк комплекссем пурри çивĕч ыйтăва татса пама пулăшать. Унччен патшалăх ферма тăкакĕн 20 процентне саплаштарнă. Малашне вара вăл 35 процент пулĕ. «Акконд-агро» фирмăра хальлĕхе майракаллă шултра выльăх йышĕ – 1554 пуç. Çывăх вăхăтра вăл палăрмаллах ÿсмелле. Мĕншĕн тесен кунта 2,5 пин ĕне усрамалăх комплекс тума палăртнă.

Джамбулат Хизирович Чăваш ял хуçалăх наука-тĕпчев институтĕнче хăмла çитĕнтерекенсемпе тĕл пулнă, «симĕс ылтăна» туса илес ыйтăва хускатнă. Ларăва Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă.

Институт директорĕ Андрей Фадеев каланă тăрăх – йывăрлăха пăхмасăр кунта хăмлан 250 сортне упраса хăварнă. Тепĕр 8 çĕнĕ сорт кăларнă. Техĕмлĕ чĕртавара сăра вĕретекенсем уйрăмах кăмăллаççĕ. Анчах ĕç-хĕле йĕркелеме института çĕнĕ техника, оборудовани кирлĕ. Патшалăх пулăшăвĕсĕр производствăна аталантарма йывăр.

Темиçе çул каялла Раççейре 20 регионра хăмла çитĕнтернĕ. Халĕ Чăваш Енре çеç ытларах туса илеççĕ. Кÿршĕри регионсенче пур-ха, анчах унăн лаптăкĕ сахал. Çавна май институт шăпи те çип çинче çакăнса тăнă темелле. Республика ертÿçисем çине тăнипе кăна ăна упраса хăварма пултарнă.

Çĕршывĕпе чапа тухнă чăваш хăмлин ырă ятне тавăрма çăмăл пулмĕ. Çапах ку енĕпе ĕçлеççĕ темелле. Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – республикăра чĕртавар калăпăшне тапхăр-тапхăрпа ÿстерсе пырасшăн. «Хăмла туса илесси – вăрах вăхăтлăх инвестици проекчĕ, унта вăй-хал, укçа-тенкĕ самай хывмалла, çапах кайран унăн тупăшĕ 70 процента çитет», – тенĕ Михаил Игнатьев.

«Чăвашхмельпром» пĕрлешÿ продукцине çĕршыври сăра завочĕсем те туянаççĕ. 30 çул ытла ĕнтĕ вăл хăмлана пĕрчĕлесе кăларать. Иртнĕ çул вара çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă. Кăçал хăмлана унпа пĕрчĕлесшĕн.

Джамбулат Хатуов каланă тăрăх – Раççейре хăмла отраслне аталантарасси çивĕч тăрать. Хăй вăхăтĕнче çĕршыври сăра завочĕсем, фармацевт компанийĕсем ют çĕршыв чĕртаварĕ çине кучĕни те рынокра вырăнти продукци çулне пÿлчĕ темелле. Паян вара ăна чикĕ леш енчен турттарма самай хака ларать. Халĕ вĕсем партнерсем шыраççĕ. Федерацин аграри ведомствин ертÿçин заместителĕ палăртнă тăрăх – вунă çулта хăмла отраслне чĕртсе тăратнипе пĕрлех Европа çĕршывĕсене экспортпа тухмалла.

Джамбулат Хизирович çĕрулмине тараннăн тирпейлессипе инвестици проектне пурнăçа кĕртмеллине те каланă. «Иккĕмĕш çăкăра» Чăваш Ен тата Брянск облаçĕ ытларах туса илеççĕ. Чăн та, вĕсен кăтартăвĕ пысăкрах, анчах пирĕн республика та ăна хăваласа çитме пултарнине палăртнă хăна. Çавăн пекех уй-хире минерал удобренийĕ хывассине ÿстермеллине те асăннă. Аграрисем умĕнчи тĕп тĕллевсенчен пĕри – ял хуçалăх производствин тупăшлăхне ÿстересси, конкуренцие юрăхлă продукци туса илесси, тĕнче рынокне тухасси, вăрлăх, селекци ĕçне аталантарасси, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртесси.

# Чăваш хăмлин чапĕ таврăнĕ

Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ



**Лариса НИКИТИНА.**

# Республика уй-хирĕнче

**(Çурла уйăхĕн 16-мĕшĕ тĕлне)**

Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсене 186,7 пин гектар (64,5 проценчĕ) вырса çапнă ĕнтĕ. Пÿлмене 455,9 пин тонна кĕнĕ (2015 çулта – 255,9 пин тонна). Гектарти вăтам тухăç – 24,4 центнер. Чи пысăк кăтарту Вăрнар районĕн – 30,1 центнер. Комсомольски, Патăрьел, Елчĕк районĕсенче лаптăксен 80 проценчĕ пушаннă.

Çĕрулмине 86 гектар çинчен кăларнă. Гектарти вăтам тухăç – 250 центнер. Пахчаçимĕçе 150 гектар çинчен пуçтарнă. Гектарти вăтам тухăç – 250 центнер.

Хуçалăхсем кĕрхисем акма 82,2 пин гектар (82,2 процент) çĕр хатĕрленĕ. Çĕмĕрле районĕнчи кăтарту – 144,4 процент. Йĕпреçсем те плана ирттерсе тултарнă. Республикăри 11 районта кĕрхисем акма пуçланă. Пурĕ – 1964 гектар.

Хуçалăхсенче утă – 138,7, сенаж – 129,4, силос 18,6 процент хатĕрленĕ. Условнăй выльăх пуçне республикипе 19,4 апат единици тивет.

Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ



*Патăрьел район уй-хирĕнче*

ÇЫРĂНТАРУ-2016

**2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен йÿнĕ хакпа «ХЫПАРА» – 664,74 тенкĕпе, «ХЫПАР-эрнекуна» – 319,92 тенкĕпе, «ХРЕСЧЕН САССИНЕ» 254,70 тенкĕпе кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ.**

ХЫПАР-ХĂНАР

## Пĕчĕк хуçалăхсене пулăшма

Саранскра «Ял территорийĕсене, ял хуçалăх кооперацине аталантарасси, пĕчĕк хуçалăхсене пулăшасси» темăпа канашлу иртнĕ. Унта ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов та хутшăннă.

«Ял хуçалăх кооперацийĕ ялта пĕчĕк бизнеса аталантармалли локомотив пулма тивĕç. Вăл паянхи кун та хăйне туллин кăтартайман-ха», – палăртнă унта. РФ ял хуçалăх министрĕ Александр Ткачев хушăвĕпе килĕшÿллĕн 2016-2017 çулсенче ял хуçалăх кооперативне 1500-тен кая мар йĕркелемелле. Ку тĕлĕшпе Липецк облаçĕ ăнăçлă ĕçлет. Канашлăва хутшăннисем унпа çывăх паллашнă.

## «Ылтăн кĕркунне»

2016 çулхи юпа уйăхĕн 5-8-мĕшĕсенче Мускавра ВДНХра Раççейри агропромышленноç куравĕ иртет. Ăна РФ Ял хуçалăх министерстви йĕркелет.

Унта кăçал та Раççейĕн 50 регионĕнчен тата чикĕ леш енчен 2,5 пин представитель хутшăнĕ.

Тĕп хулара вара «Ылтăн кĕркунне» гастрономи фестивалĕ йĕркелеĕç. Мускавра пурăнакансем регионсен продукцине йÿнĕ хакпа туянма пултарĕç. Чăваш Енрен те паллă предприяти-организацисем курава тавар тăратĕç, сутĕç.

## Республикăна – 13 машина

Çитес вăхăтра Раççей субъекчĕсене васкавлă медпулăшăвăн 1317 машинипе тивĕçтерĕç. 2016 çулта сывлăх сыхлавĕн тытăмне хамăрăн çĕршыв производителĕсем туса кăларнă автомобильсене çеç сĕнĕç.

Кăçалхи авăн уйăхĕнче Чăваш Ене те васкавлă медицина пулăшăвĕн В класлă 12 автомобилĕ тата С класлă пĕр реанимобилĕ («Форд транзит» автомобиль) килсе çитĕ.

2013-2015 çулсенче ятарлă программăсемпе килĕшÿллĕн республикăна васкавлă медицина пулăшăвĕн 7 машинипе тивĕçтернĕ.

## Ярмăрккăра – вырăнти пахчаçимĕç

Республикăри хуласенче çулсерен «Кĕр парнисем» ярмăрккăсем ирттересси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Кăçал ăна çурла уйăхĕн 20 – юпа уйăхĕн 1-мĕшĕсенче йĕркелеççĕ. Çак вăхăтра вĕсенче пахчаçимĕç, çĕрулми сутма вырăнсем тÿлевсĕр уйăраççĕ. Суту-илĕве ял хуçалăх организацийĕсем, фермерсем, уйрăм çынсем хутшăнма, хăйсем туса илнĕ продукцие сутма пултараççĕ.

Вăтăсене, сусăрсене чĕртавара вырăна çитерме машина тÿлевсĕр уйăрĕç. Ярмăркка хулара пурăнакансене хĕле валли йÿнĕ те паха пахчаçимĕç çителĕклĕ туянма май парать.

ТĔЛПУЛУСЕМ

# Тĕрлĕ ыйту пĕр тĕвĕре

**Иртнĕ эрнере Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Муркаш, Элĕк, Çĕрпӳ тата Етĕрне районĕсенче пулчĕ.**

Михаил Игнатьев чи малтан Калайкассинчи А.Г.Николаев космонавт летчик ячĕллĕ шкулта пулса курчĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулне епле хатĕрленнипе паллашрĕ. Татьяна Ершова директор каланă тăрăх – юлашки икĕ çулта шкул инфратытăмне аталантарма 3 млн ярăх укçа уйăрнă. Кăçал спортзала тĕпрен юсанă, спорт инвентарĕ туяннă.

Асăннă шкул алăкне кăçал 14 ача пĕрремĕш хут уçать. Пĕтĕмпе вара 164 вĕренекен пĕлӳ пухать кунта. Вĕсем 19 ялтан килеççĕ.

Калайкасси шкулĕ чăваш культурине аталантарассишĕн тăрăшать. Çуллахи вăхăтра этнолагерь ĕçленĕ. Кунтах уçă тӳпе айĕнче этномузей йĕркелеме палăртнă. Пĕтĕм Раççейри конкурссемпе олимпиадăсен çĕнтерӳçи, чăваш чĕлхи учителĕ Александр Степанов чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем валли грант уйăрмашкăн май тупма сĕнчĕ. «Тăван çĕршыва юратасси çуралнă тăрăха, чĕлхене, культурăна, йăла-йĕркене юратнинчен пуçланать», – терĕ вăл.

Республика ертӳçи ял çыннисемпе те курнăçрĕ, вĕсен ыйтăвĕсене хуравларĕ. Çавăн пекех район активĕпе канашлу ирттерчĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленнишĕн ентешсене тав турĕ. Муркашсем выльăх ĕратне аталантарас тĕлĕшпе тахçанах ĕçленине, малашне те ку çул-йĕре тытса пымаллине палăртрĕ. Районта фельдшерпа акушер пунктне тăвас ĕçĕн пĕрремĕш тапхăрĕ вĕçленсе пырать. Кунта тепĕр 3 ФАП тумалла. Асăннă района республика ку тĕлĕшпе пулăшать. «Муркашсем – маттурсем. Малашне те çĕнтерӳ патне ăнтăлăр», – терĕ Михаил Васильевич вĕсене ырă сунса.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Элĕк районĕнчи «Новый путь» ЯХПК йĕтемĕнчи ĕçхĕлпе паллашрĕ. Ăна лайăх йĕркеленине палăртрĕ.

Тыр-пула çурри ытла пуçтарнине, тухăç гектартан 23,5 центнер тухнине пĕлтерчĕ Иван Игнатьев председатель.

Михаил Игнатьев район пуçлăхĕпе Владислав Волковпа тата администраци ертӳçипе Александр Куликовпа республика программисене пурнăçлани, пушă çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртни, демографи лару-тăрăвĕ пирки те калаçрĕ.

– Районта усă курман лаптăксем – 8 пин ытла гектар. Вĕсенчен 6819-ăшне шута илнĕ. 1534-шне çулталăк вĕçлениччен ĕçе кĕртĕпĕр. Çĕр ыйтăвĕ кăçал таталĕ, – терĕ Александр Куликов.

Республика пуçлăхĕ Çĕрпӳ хулин уявĕнче те пулса курчĕ. Ăна ентешсем çурла уйăхĕн 12-мĕшĕнче палăртрĕç. Çĕрпӳ кăçал 427 çул тултарчĕ. Михаил Игнатьев кунта Иккĕмĕш Кĕтерне патшана халалланă палăка уçма хутшăнчĕ.

Ĕçре хастаррисене ЧР Пуçлăхĕ Тав хучĕпе тата алла çыхмалли сехетпе чысларĕ. Çавăн пекех «Ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасене пурăнмалли вырăнпа тивĕçтересси» республика программипе килĕшӳллĕн Рамазан Алеевпа Евгений Петрова хваттерсен уççине пачĕç.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Етĕрне районĕнчи Тури Ирçе ялĕнче çул сарас ĕç-хĕлпе паллашрĕ.

– «Пĕрле пурăнмалла, пĕрле вăй хумалла» халăх программи агропромышленноç комплексне аталантарма, çул-йĕр пахалăхне лайăхлатма, çуртсен картишĕсене хăтлăх кĕртме май парать. Эпир ял çыннисен лайăхрах пурăнччăр тетпĕр. Ырă улшăнусем вĕсене тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантараççĕ», – терĕ Михаил Васильевич.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Кузьмин пĕлтернĕ тăрăх – кăçал тепĕр сакăр ялта çул тумалла.

Республика ертӳçи урамсем тăрăх утнă май тирпейсĕрлĕхе те асăрхарĕ. Муниципалитет влаçĕ хула илемĕпе хăтлăхĕшĕн тăрăшманнине пĕлтерчĕ. Вăл çавăн пекех хулапа район активĕн канашлăвне хутшăнчĕ, çынсен ыйтăвĕсене хуравларĕ.

Çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче Етĕрнесем те хула кунне палăртрĕç. Ăна йĕркеленĕренпе кăçал 426 çул çитрĕ. «Етĕрне хулин хăйĕн историйĕ. Вăл хăйнеевĕрлĕ йăла-йĕркепе, пултарулăхпа палăрса тăрать. Эсир ăна юрататăрах пулĕ тетĕп. Хула илемлĕрех те тирпейлĕрех пултăр тесе кашнийĕ тăрăшасса шанас килет», – терĕ Михаил Васильевич ентешсене саламланă май.

**Хамăр инф.**

ĔÇ ÇЫННИН ÇУЛТАЛĂКĔ

# Хастар çын ĕмĕр мухтавра

**Йӳçкасси тăрăхĕнчи Кивĕ Матьăк паллă та сумлă, ăста та ĕçчен çынсемпе пуян. Акă Мирон Андреев тракторист 30-40-мĕш çулсенче Чăваш АССР Аслă Канашĕн депутачĕ пулнă. Николай Андреев водитель II тата III степень Ĕç Мухтавĕн орденне, Октябрь Революцийĕн орденне илме тивĕçнĕ. Раиса Ефимова – Ĕç Мухтавĕн орденĕн кавалерĕ. Анатолий Иванов – авиаци майорĕ, ТУ–154 самолет командирĕ, Михаил Макаров – летчик, Нина Арсентьева, Николай Клементьев, Валентина Семенова, Никита Петров учительсем, Леонид Андреев профессор... Хисеплĕ çынсене асăнса та пĕтереймĕн.**

Кивĕ Матьăкра 1925 çулхи пуш уйăхĕн 17-мĕшĕнче Поликарп Петрович Прокопьев та çуралнă (ун чухне ял Элĕк районне кĕнĕ). Ĕçчен çемье выльăх-чĕрлĕх йышлă усранă. Вĕсен икĕ арман пулнă. Прокопьевсем тарçă тытман, хăйсемех вăй хунă. Анчах икĕ арман хăшне-пĕрне канăç паман курăнать. Кĕçех çемьене кулак тесе айăпланă, пурлăхне туртса илнĕ. Хăйсене Çĕпĕре янă. Çав вăхăт тĕлне Поликарп 3 çулти ача пулнă. 1928 çулта çемье тăван тăрăхна сывпуллашса аякка тухса кайнă.

Прокопьевсем Тюмень облаçĕнчи Велижанск (халĕ – Анат Тавда) районĕнчи Баитово хутора çитсе вырнаçнă. Кунтах арçын ача шкултан вĕренсе тухнă. 1942 çулта çамрăка вуннăмĕш класранах Совет Çарне илсе кайнă. Вăл Свердловск хулинчи Урал çар округĕнчи 14-мĕш инженер-сапер бригадин курсанчĕ пулнă. Вăрçă хирĕнче Орловл-Курск пĕккинчи çапăçусене, Орш, Смоленск, Минск, Брест, Львов хулисене тăшманран ирĕке кăларнă. Иккĕмĕш Украина фрончĕн взвод командирĕн пулăшаканĕ пулса Будапешт, Тису, Балатон патĕнчи çапăçусене хутшăннă. Венгрири Балатон кӳлĕре йывăр аманнă. Сывалнă хыççăн каллех фронтра çапăçнă. 1945 çулхи çу уйăхĕн 13-мĕшĕчченех взвод командирĕ шутланнă. Австри, Чехословаки çĕршывĕсене çитнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Поликарп Петровича Прокопьева Хĕрлĕ Ялав, Хĕрлĕ Çăлтăр, I степень Тăван çĕршыв вăрçин орденĕсемпе, 9 медальпе наградăланă.

1950-1954 çулсенче Тюмень облаçĕнче патшалăх хăруш-сăрлăхĕн органĕнче ĕçленĕ. Ун хыççăн право органĕнче, хаçатра та вăй хунă вăл. Ял хуçалăх ертӳçисен курсне пĕтернĕ. Çулланнине пăхмасăр 1960 çулта Тюменьри ял хуçалăх институчĕн агрономи факультетне вĕренме кĕнĕ. Хăйĕнчен 20 çул кĕçĕнрех çамрăксемпе парта хушшине ларнă. Мăшăрĕ Клавдия Дмитриевна çине тăнипе кăнтăрлахи уйăрма ăс пухнă вăл. Анчах институтран васкавлă вĕренсе пĕтерме тивнĕ. 4 колхоза пĕрлештернĕ май председателе Поликарп Петровича суйланă. 1963 çулта, йывăр тапхăрта ĕçлеме тытăннă вăл. Тырă, выльăх апачĕ, вăрлăх пулман. Хуçалăх территорине 16 ял кĕнĕ. Поликарп Прокопьев Анат Тавда районĕнче 30 çул ытла "Большевик" хуçалăха ертсе пынă. Колхоз Тюмень облаçĕнче кăна мар, çĕршывĕпех палăрнă. Пуян опытпа паллашма ял хуçалăх ĕçченĕсем аякранах килнĕ. Т.С. Мальцев академик та унта çитнĕ. Вăл ĕçленĕ тапхăрта сĕт, аш-какай, тырă, çĕрулми туса илесси икĕвиçĕ хут ӳснĕ. 1980-мĕш çулсенче хуçалăхăн усă куракан çĕр



**Поликарп Прокопьев** *(сулахайран пĕрремĕшĕ) ĕçтешĕсемпе пĕрле.*

лаптăкĕ 11 пин гектара çитнĕ. Майракаллă шултра выльăх йышĕ – 5 пин пуç. Хуçалăх гектар пуçне пĕрчĕллĕ культурăсем 22 центнер пуçтарса кĕртнĕ. Ял хуçалăх продукцине 6 млн тенкĕлĕх сутнă. Банк счечĕ çинче 2 млн тенкĕ пулнă. 1985 çулта колхозниксен вăтам шалăвĕ 220 тенкĕпе танлашнă.

Ял хуçалăх производствине аталантарассипе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн П.П. Прокопьева 1966 çулта Ленин орденĕ тата "Çурлапа Мăлатук" ылтăн медаль парса чысланă.

Хуçалăхра хăрамасăрах отрасльти çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртнĕ. Тырă туса илнĕ çĕрте минерал удобренийĕсемпе усă курассипе опытсем ирттернĕ, тĕрлĕ сорт тĕрĕслесе пăхнă. 80-мĕш çулсенче тырă культурисем гектартан 22 центнер тухнă. Тулăн хăш-пĕр сорчĕн тухăçĕ 46,7 центнера ("нева" çурхи тулăн) çитнĕ. Кунти ака-сухана кĕске хушăра ирттерес паха опыта Тюмень облаçĕпех сарнă. Пушă выртакан çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртессипе, выльăх апачĕн культурисене лайăхлатассипе те самай ĕçленĕ.

Поликарп Прокопьев 2 кĕнеке çырнă: "Интенсивный откорм телят" (1966), "Земля. Люди. Урожай" (1974). Хаçат-журналта та унăн статйисем чылай пичетленсе тухнă. "Октябрь" журнал редколлегин членĕ шутланнă. "Правда" хаçатра та пичетленнĕ. Пуçарулăх председатель тăван çĕршывшăн, ентешĕсемшĕн самай ырă ĕç тунă. Ăна паянхи кун та ăшшăн аса илеççĕ. Тюменьре, Анат Тавдара унăн ячĕпе урамсем хисепленеççĕ. 2014 çулта Тюменьри Орджоникидзе урамĕнче фронтовиксене асăнса палăк уçнă. Списока Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, Социализм Ĕçĕн Геройĕ ятне тивĕçнĕ Раççейри пĕртен-пĕр КГБ ĕçченĕ, чекист П.П. Прокопьев ятне кĕртнĕ.

Ĕçчен те пуçарулă, хастар çын пирки 1971 çулта "Çăкăр" фильм ӳкернĕ. Кĕнекесем, статьясем, "Поликарп Первый" пьеса çырнă. "Çăкăр" фильм ăна вăрçă хирĕнче пĕрле çапăçнă юлташĕсене тупма пулăшнă. Кайран фронтовиксем çулсеренех тĕл пулнă. Поликарп Прокопьев 1996 çулхи кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕнче вилнĕ.

Çĕршывĕпе палăрнăскер кун çути курнă тăрăха та манман. Поликарп Петрович Муркаш районĕнчи "Ударник" хуçалăха 1980-мĕш çулсенче килсе кайрĕ. Тăван Матьăк ялне çитсе курчĕ. Вăл вăхăтра ĕçленĕ Платон Павлович Давыдовпа тĕл пулчĕ. Кайран та ĕçлĕ çыхăнусем тытрĕç вĕсем. Пирĕн хуçалăх П. Прокопьев ертсе пыракан "Большевик" колхозран 100 тонна ытла утăлăм турттарса килчĕ. "Ударник" та парăмра юлман. Пирĕн тăрăхри платниксем Тюмень облаçне кайса унти ĕçченсене çуртсем туса пачĕç.

Вырăссем хушшинче ӳснĕ пулин те Поликарп Петрович чăвашла лайăх калаçатчĕ. Пирĕн тăрăхран çакăн пек пултарулă, паллă çын тухнишĕн савăнатпăр.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**
**Муркаш районĕ.**

# 104 çулта

**УЛАТĂР РАЙОНĔНЧИ КИВĔ ЭЙПЕÇ ЯЛĔНЧЕ ПУРĂНАКАН ЕМЕЛЬЯН ИВАНОВИЧ НИКИШИН НУМАЯХ ПУЛМАСТЬ 104 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ. ВĂЛ АСĂННĂ РАЙОНТА – ЧИ ВАТĂ ÇЫН.**



Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

Унăн кун-çулĕ çăмăл пулман. Емельян Иванович Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Тăшмана çапса аркатнă хыççăн та тăван тăрăха часах таврăнайман. Вĕсен дивизине Инçет Хĕвелтухăçне Япони самурайĕсемпе çапăçма куçарса кайнă. Японие çĕнтернĕ хыççăн çеç киле килнĕ. Унăн кăкăрне икĕ Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, II степень Тăван çĕршыв вăрçин орденĕ тата «Паттăрлăхшăн» медаль илемлетнĕ.

Вĕсем мăшăрĕпе Елена Николаевнăпа пилĕк ывăлпа пĕр хĕр çуратса ÿстернĕ. Ывăлĕсем пурте аслă шкул пĕтернĕ.

Емельян Никишин çулне кура мар вашават. Вăл халĕ те куçлăхсăрах вулать, район, республика хыпарĕсемпе кăсăкланать. Хăй ĕмĕрĕнче сăра-эрехпе иртĕхмен, пирус туртман, яланах вăй хурса ĕçленĕ, çынпа килĕштернĕ. Вăрăм ĕмĕрĕн вăрттăнлăхĕ шăпах çакăнта ĕнтĕ.

Емельян Ивановича ял-йыш хисеплет. Ахальтен мар ăна çуралнă кун ячĕпе саламлама Улатăр район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Романов, ял тăрăхĕн ертÿçи Василий Казанцев тата çĕршыв тăрăх саланнă тăван-пĕтенĕ килнĕ.

**Валентина МАКСИМОВА.**

# Асрах эсĕ, çамрăклăх

Вăрçă хыççăнхи çулсенче чарусăртарах çамрăксене ФЗОна ăсататчĕç. Эпир, Упамса ялĕнче пурăнакан пилĕк каччă, 1953 çулта унта хамăр ирĕкпех каяс терĕмĕр. Малтанах салтака кайнă пек лашапа ял тăрăх виçĕ кун юрласа çÿрерĕмĕр. Каярахпа ял канашĕн ертÿçи пире Аслă Арапуçне леçсе ячĕ. Сăмах май, пирĕн пеккисене ФЗОна ăсатнăшăн вĕсене вăл вăхăтра мухтанă та.

Турхансем те пурччĕ, 15 çын. Раштав уйăхĕнче 20-25 градус сивĕре ГАЗ-51 машинăпа Канаша çул тытрăмăр. Уçă кузов çинче пĕр-пĕрне хуплаласа вырта пытăмăр: аялтисем ăшăнсан çиеле тухатчĕç, çиелтисем – аяла. Мĕнле майпа тăм илмен пире?

Канашра ятарлă пунктра пĕр эрне пурăнтăмăр: комисси тухрăмăр, мунча кĕртрĕç, тумтирсене пыйтă-шăркаран тасатрĕç. Пĕри, хамăр хушăмăртиех, çĕçĕпе хăратса манăн кăçата хывса илесшĕн пулчĕ, анчах аптрамарăм, памарăм.

Кемер облаçĕнчи Новокузнецк станцине çитсен пире ăсатакан çын сывпуллашрĕ, теприне документсене пачĕ. Вокзалта малтан Сидорова, унтан мана темле çынсем вăрласа кайма шухăшланă. Вĕсем укçапа илĕртрĕç, мороженăй пачĕç. Çакскерсенчен аран тарса хăтăлтăм.

Сталинск-17 хула таврашĕнчи Абашево поселокне çитрĕмĕр. Хĕллехи 30-35 градус сивĕре пире каменщика вĕрентрĕç. Столовăй сăрт çинче ларатчĕ. Пĕр çухрăм çурă утмаллаччĕ. Каялла килнĕ май ту çинчен ярăнса анаттăмăр.

1954 çулта вĕренсе пĕтертĕмĕр. 30 ачана Казахстана яма палăртрĕç, анчах 25 çамрăка çеç илсе кайссине пĕлтерчĕç. Çапла вара пире, пилĕксĕмĕре, хăварчĕç. Манăн юлташсене илсе кайрĕç. Эпĕ çав тери кулянтăм. Уйрăмах Илья Сергеевшăн. Вĕсенчен уйрăлсан пĕчченех тăрса юлтăм. Общежити пÿлĕмĕнче 6-мĕш çын пулса вырнаçрăм. Кунта тĕрлĕ халăх пурăнатчĕ. Мишăпа иксĕмĕр чăвашсемччĕ. Пĕрремĕш шалăва илсенех картла выляма вĕрентетпĕр тесе укçана хăйсен аллине пĕтĕрсе чикрĕç. Тумтире те тăхăнатчĕç. Ботинка хама кирлĕ терĕм те Коля хăлха чикки тыттарчĕ.

Пĕрле пурăнакансем эрех ĕçме кăмăллатчĕç. Шалу илсенех пухăнса ĕçетчĕç. Кайран выçăллă-тутăллă пурăнатчĕç. Каçхине ют пахчасене çĕрулми вăрлама каятчĕç. 1955 çулта çак пилĕк юлташран пĕрне салтака кайма ят тухрĕ. Сăра-эрехпе туслашнăран виççĕшĕ вилчĕ.

Укçана пуçтарса илнĕ хыççăн виçĕ кун çăвара пĕр тĕпренчĕк ямасăр ĕçе кайрăм. Канаш ачи çакна сисрĕ. Эпĕ хамăн хуйхă пирки пĕлтертĕм ăна. Вăл мана хăйĕн апачĕпе хăналарĕ, кăштах ятласа та илчĕ. Телее, çав кунхине пирĕн бригадăна кантура чĕнсе илчĕç, 200-шер тенкĕ аванс парса Киселевск хулине ячĕç. Кунта 12-мĕш шахтăна хута ямаллаччĕ, ĕç нумай. Пирĕн бригадир Иван Демченко питĕ пултарулăскерччĕ. Ниměнле ĕçе те тиркемен вăл. Ăçта кирлĕ – çавăнта чупнă. 4-5 уйăх вăй хутăмăр унта. Укçине те 4-5 пин тенкĕрен кая мар пачĕç. Кунта ФЗОра проходчика вĕренекен чăваш каччисем те пурччĕ. Пĕр-пĕринпе тĕл пулсан яланах калаçаттăмăр. Иккĕшĕ те Элĕк районĕнченччĕ. Кузбасра вăл вăхăтра чăвашсăр пĕр шахтă та пулман пулĕ.

Каялла таврăнсан тÿрех комендант патне кайрăм, хама урăх пÿлĕме куçарма ыйтрăм. Çавăн пекех шалăва та ăнах патăм, вăл мĕнле çын пулнине пĕлмесĕрех. Пÿлĕме кайсан каллех укçасăр юласран шиклентĕм.

Комендант мана виçĕ шахтер – Василий Фомичев, Владимир Болдышпа Семен Борисов – патне вырнаçтарчĕ. Вĕсем мана кăмăллăнах йышăнчĕç, пирĕн шăллăм пулатăн терĕç. Çав вăхăтрах хама тытма пĕлмелли çинчен асăрхаттарчĕç.

Командировкăра чухне 3-4-мĕш шахта çумĕнче электриксен курсĕ уçăлнă. Аслă юлташсем пулăшнипе эпĕ унта вĕренме кĕтĕм. Вĕсем мана кĕнекесем те тупса пачĕç, пушă вăхăтсенче пулăшатчĕç те.

Виçĕ уйăхран алла документ илтĕм, больницăра комисси тухрăм. Анчах тĕп врач шахтăна яма килĕшмерĕ. Унта ĕçлеме çамрăкрах пулнипе сăлтавларĕ, «не допускается» тесе ал пусрĕ, пичет çапрĕ. Эпĕ вара чутах йĕрсе яраттăм. Манăн виçĕ юлташ та шухăша путрĕç. «Не» тенине майлаштарса хуратса хучĕç, хăйсем ĕçлекен шахтăна дежурнăй электрик пулăшуçине вырнаçтарчĕç. Ку юлташсем виççĕшĕ те 1928 çулта çуралнăскерсемччĕ. Вăрçă хыççăн çĕршыва ура çине тăратма вĕсене салтака ярас вырăнне ĕçлеттернĕ. Каярахпа çак çулсене хĕсмет шутне кĕртнĕ.

Çулсем иртнĕçемĕн Çĕпĕрте пĕрле пурăннă туссене куллен тенĕ пекех аса илетĕп. Вĕсем мана хăйсен кĕçĕн шăллĕ вырăнне хурса ăс панă сăмахсене нихçан та манас çук. Вĕсемпе тĕл пулман пулсан ман шăпа еплерех пулатчĕ-ши?

Эпĕ хам пурнăçра Çĕпĕрте 30-40 градус сивĕре 4-5 хутлă çуртсем купаланă, шахтăра кăмрăк кăларнă, ГЭС тума, Çĕнĕ Шупашкара никĕслеме хутшăннă. Салтакри виçĕ çула пĕрле хушса шутласан вунă çул общежитире пурăнса ирттернĕ. Ĕçкĕпе иртĕхсе курман. Хамăр пурнăç хамăр алăра тенипе килĕшетĕп эпĕ.

Пирĕн, вăрçă ачисен, йывăрлăхсем çитеĕклех пулнă, çапах наăкăшман. Выçă та, çарран та çÿренĕ, пĕрех хуласене çĕкленĕ, çĕршыва ура çине тăратнă.

**Александр ЛЕОНТЬЕВ.**
**Патăрьел районĕ.**

# Явап тыттарĕç-ши?

Кăçалхи çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче "Хресчен сассинче" "Çуртйĕр çаратсан" статьяна вуласан шухăша кайрăм. Ман пеккисем татах пур-мĕн. Ют çурта вăрăсем çăра уçса кĕреççĕ, çаратнă хыççăн питĕрсе хăвараççĕ. Ун пеккисем пирĕн ялта та икĕ çемье пур. Вĕсене ним те тăваймăн. Хуçасăр çуртйĕре суйласа илеççĕ. Хăйсене мĕн кирлине илсе тухса каяççĕ. Вăрлама машинăпах çÿреççĕ. Унăн хуçисем И. хушаматлăскерсем. Вĕсен полицинче те пĕлĕшĕсем пур. Çитменнине пĕри ял тăрăхĕн депутачĕ шутланать. Çавăнпа вĕсен çулĕ такăр, айăплакан та, тытакан та çук. Малтан ăçта мĕн выртнине пăхса çÿреççĕ, унтан "сунара" тухаççĕ. Мĕнле чармалла пуçтахсене, аптриш! Ятăма çырмастăп, хам та вĕсенчен хăраса пурăнатăп.

**Н. Çĕрпÿ районĕ.**

## КĔСКЕН

# Телевизортан – палăк

«Чăваш Ен» ПТРК çурчĕ умĕнче телевизор палăкне вырнаçтарнă. Ăна 67 телевизортан хатĕрленĕ. Композици 2 метр çÿллĕш.

Кивĕскерсене республикăра пурăнакансем илсе килнĕ. «Чăваш Ен» ПТРКна юбилей ячĕпе укçасăрах панă. Пĕтĕмпе 300-е яхăн телевизор пухăннă.

Палăка вырнаçтарма малтанах каркас тунă. Унта телевизорсене çирĕплетнĕ. Композици каçхине çутатать. Вăл çумăра та, юра та чăтăмлă.

# Хула кунĕ ячĕпе

Çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнче Шупашкар хăйĕн çуралнă кунне уявлать. Çавна май хăнасене кĕтсе илме хатĕрленет вăл. Хула кунĕ ячĕпе саламлама Олег Газманов юрăç тата композитор килĕ. Унăн концерчĕ Хĕрлĕ тÿремре 21 сехетре пуçланать. Паллах, ытти мероприяти те иртĕ.

Хула кунне палăртма кашни çулах Шупашкара «Стрижи» пилотаж ушкăнĕ килетчĕ. Кăçалхи уяв вĕсемсĕрех иртĕ.

# Тăваттăмĕш вырăнта

Бразилири Рио-де-Жанейрăра старт илнĕ Олимпиада вăйи илсех пырать. Пĕтĕмĕшле наград шучĕпе Раççей спортсменĕсем хальлĕхе – тăваттăмĕш вырăнта.

Тĕнче шайĕнчи ăмăртăвăн пĕрремĕш «ылтăнне» Беслан Мудранов дзюдоист çĕнсе илчĕ.

Сумлă тупăшура çĕршыв чысне 287 спортсмен хÿтĕлет. Вĕсем спортăн 30 енĕпе ăмăртаççĕ. Шел те, Раççейĕн пĕрлештернĕ команди унта туллин хутшăнаймарĕ.



Дарья Спиридонова

Çĕнĕ Шупашкар пики Дарья Спиридонова (Мускаври «Самбо – 70» спорт шкулĕ) гимнастсен турнирне хутшăннă. Унта Раççей хĕрĕсем Алия Мустафина, Седа Тутхалян, Ангелина Мельникова, Мария Пасека тата пирĕн ентеш, Дарья Спиридонова, кĕмĕл медаль çĕнсе илчĕç.

2008 çулхи Олимп вăййисен бронза призерĕ Ирина Калентьева маунтинбайкистсен турнирĕнче – çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче – вăй висĕ.

2012 çулхи Паралимп вăййисен виçĕ хут чемпионки Елена Иванова вара старта тухасси иккĕленÿллĕ. Пĕтĕм тĕнчери Паралимп комитечĕ пирĕн çĕршыв спортсменĕсене унта хутшăнма чарнă.

# 1 метртан аяккарах

**?** **Ҫуркунне кӳршӗ ман дача участокӗпе юнашарах пысӑк теплицӑсем туса лартрӗ. Халӗ йӑрансем кунӗпех сулхӑнра. Ҫавна май тухӑҫ та чакрӗ. Теплицӑсене вырнаҫтармалли норматив пур-ши?**

**М. СЕМЕНОВА.**
**Ҫӗрпӳ районӗ.**

Строительство нормативӗпе тата сад тытакансен йӗркипе килӗшӳллӗн теплица кӳршӗ пахчинчен 1 метртан кая мар аяккарах пулмалла. Унсӑр пуҫне сад участокӗсен хушшинчи карта решеткеллӗ кирлӗ. Кӳршӗ йӗркене пӑснине правление е вырӑнти ял тӑрӑхне пӗлтермелле. Ку та пулӑшмасан ҫӗр участокӗпе туллин усӑ курма чӑрмантаракан пускил пирки суда ҫӑхав ҫырмалла. Ҫапах малтан айӑпли патне ҫырупа тухмалла, теплицӑна куҫарма ыйтмалла, картаран 1 метр шаларах куҫармасан суд тӑкакӗсене унӑн тӳлеме тивет.



# Права ҫухатсан

**?** **Водитель правине ҫухатрӑм. Ӑна тавӑрма каллех экзамен тытмалла-ши?**

**Марина НИКОЛАЕВА.**
**Красноармейски районӗ.**

РФ Правительствин йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн (2014 ҫулхи юпа уйӑхӗн 24-мӗшӗ) водитель удостоверенине экзамен тытмасӑр параҫҫӗ:

- ♦ водитель удостоверенийӗн вӑхӑчӗ тухсан;
- ♦ хуҫин удостоверенире кӑтартнисем улшӑнсан;
- ♦ документ юрӑхсӑра тухсан (кивелнипе, сиенленнипе тата ытти те);
- ♦ водитель удостоверени ҫухатни (вӑрлани) пирки право органне ҫырса парсан.

# Ирӗк илмелле

**?** **Ывӑлӑм авланчӗ. Халӗ арӑмне пирӗн пата хваттере прописккӑна тӑратасшӑн. Пирӗн вара тепӗр ывӑл пур. Ҫавӑнпа эпӗ ҫакна хирӗҫ. Упӑшка ирӗк парать. Хваттере приватизацилесшӗн, унччен прописккӑна никама та тӑратасшӑн мар.**

**Наталья Н.**
**Шупашкар районӗ.**

Хваттере прописккӑна тӑрас тесен унта пурӑнакан, 18 ҫул тултарнӑ ҫемье членӗсенчен ирӗк илмелле. Енчен эсир ирӗк памасан ывӑлӑр арӑмне прописккӑна тӑратаймасть.

ПАХЧАҪӐ

# Хӗле хатӗрленсе

**Елчӗк районӗнчи А. Жирков ыйтӑвне тивӗҫтерсе винограда хӗл касма хатӗрлессипе паллаштаратпӑр.**

**КАСАТПӐР**

Ҫимӗҫе пуҫтарса илнӗ хыҫҫӑн вӑйсӑр, типнӗ туратсене, ҫамрӑк хунавсене йӑлтах касмалла. Ҫакна ҫанталӑк шӑнтиччен тумалла. Сывлӑш температури – 3 градусран пысӑк пулмалла мар. Турата касни шартлама сивӗрен те упрать. Ҫакна ҫулҫӑ тӑкӑннӑ хыҫҫӑн икӗ эрнерен тумалла. Аялти вулли ( 3-4 куҫлисем) тата ҫимӗҫ параканнисем (12 куҫлисем) юлаҫҫӗ.

✓ Авӑн уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче карта хӗррипе ҫитӗннӗ ҫамрӑк хунавсенчен (1,5 метртан ҫӳлерех) тасатмалла. Ытлашши туратсене иртмелле.

✓ Тӗрӗс каснӑ хыҫҫӑн вӑйлӑ, паккаллӑ ҫирӗп туратсем юлаҫҫӗ. Ҫуркунне вӗсенчен ҫамрӑк хунавсем вӑй илеҫҫӗ.

**ХУПЛАТПӐР**

Кӗр типӗ килсен ӗҫе тытӑнас умӗн тӗме шӑвармалла – хӗле валли нӳрӗк ҫитме.

Унтан тӗревврен илмелле, ҫӗр ҫине хумалла. Ҫиелтен улӑмпа е типӗ ҫулҫӑпа витмелле. Тӑпрапа та усӑ курма юрать. Туратсем ҫӗрелле усӑнмалла.

**Тепӗр мел.** Ҫимӗҫе пуҫтарса илсен лайӑх шӑвармалла: пӗр тӗме 10 витререн кая мар. Витрере 1 г марганцовка ирӗлтермелле. Ӳсен-тӑрана апатлантарни те вырӑнлӑ. 1 тӑваткал метра 4-5 кг компост е ҫӗрӗшнӗ тислӗк, 50 г суперфосфат, 1 г бор йӳҫекӗ, 1-2 стакан кӗл хывмалла. Тӑпрара ытлашши йӳҫек пулсан извеҫлемелле.

Юпа уйӑхӗн ҫуррине винограда хуплама юрать. Ҫакна типӗ кун тумалла, хунав йӗпенмелле мар. Тӗревврен илнӗскере ҫыхмалла, ҫӗр ҫумне тӑсса хумалла. Маларах хатӗрленӗ пӑралук ҫекӗлпе ҫӗр ҫумне ҫирӗплетмелле. Аяла лӑсӑллӑ турат, типӗ ҫулҫӑ хумалла. Унтан вӗсемпе хуплаиалла. Ҫиеле ҫӳхе хӑма хумалла, хыҫҫӑн – рубероид е полиэтилен пленка.

# Йошта

Йошта – хура хурлӑханпа йӗплӗ хурлӑхан (крыжовник) хутӑшӗ. Анчах унӑн йӗпписем ҫук. Тӗмми – 1,5 метр ҫӳллӗш. Ҫулҫи тӗксӗм симӗс тӗслӗ, шултра. Ҫимӗҫӗ чие майлӑрах. Пысӑк тухӑҫ илме ӑна органикӑпа пуян, ҫӑ, хӗвел лайӑх ӳкекен вырӑна лартмалла. Тӑприне хура хурлӑхан валли пек хатӗрлемелле. Анчах йошта кали удобренине ытларах кӑмӑллать. Ҫимӗҫӗ йӳҫекрех пылак, шӑрши мускат майӑрне аса илтерет.



Йошта

# Баклажан

Ҫурла уйӑхӗнче кӑнтӑрла шӑрӑх тӑрсан та каҫхине палӑрмаллах сивӗтет. Ҫавна май йӑран ҫинчи баклажан ҫитӗнме чарӑнать. Вӑл сывлӑш температури 23-27 градус пулнине кӑмӑллать. 12-14 градуса чаксан ҫитӗнмест. Ҫавӑнпа сивӗтме тытӑнсанах йӑрана хупламалла.

Баклажана сивӗ шывпа шӑварма юрамасть. Хӗвел ҫинче ларнӑ шыв кун каҫа ӑшӑнать. Шӑпах вӑл юрахлӑ. Ҫурла уйӑхӗнче кашни эрнерех пахчаҫимӗҫе апатлантармалла: 0,5 л органика шӗвекӗпе. Сарӑхнӑ ҫулҫисене татмалла, ҫимӗҫ тӗввине йӗркелемелле: пӗр тӗмӗре 5-рен ытла кирлӗ мар.

# Хӑяр

Ҫимӗҫ тӗвви сахал пулсан хӑяра пуҫтарса илнӗ хыҫҫӑн чӑх каяшӗн шӗвекӗпе шӑвармалла, теплицӑри температурӑна чакармалла (каҫхине усӑлтармалла). Пахчаҫимӗҫе ҫитӗнме ӗне выльӑх тислӗкӗн шӗвекӗпе шӑвармалла. Ҫимӗҫӗ чакма пуҫласан 1 витре тислӗк шӗвекне пӗр чӗптӗм мочевина хушмалла.

Ҫулҫи шурӑхни азот ҫитменнине пӗлтерет. Кун пек чухне ӳсен-тӑрана мочевинӑпа шӑвармалла (10 л шыва 50 г мочевина). Вӑйлӑ ашкӑрса ларакан тӗмре чечекӗ сахал пулсан калифосфор шывне хатӗрлемелле (8-10 лупашкана 1 витре шӗвек).

***Йӑрансем хушшине куккурус е хӗвелҫаврӑнӑш акмаҫҫӗ: вӗсем ҫӗр пулӑхне чакараҫҫӗ. Ҫитменнине ӳсен-тӑран ҫитӗннӗ май ытти пахчаҫимӗҫе хуплать, йӗркеллӗ ӳсме памасть.***

ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ

# Путене

Юлашки вӑхӑтра хушма хуҫалӑхсенче те путене тытма пуҫларӗҫ. Ӑна пӑхма йывӑр мар темелле, апат ытлашши тиркемест. Ҫак кайӑк-кӗшӗк вольерта, ахаль курупкара та аван ҫитӗнет. Пӗр тӑваткал метра 12 путенерен ытлашши вырнаҫтармалла мар. Ҫутӑ талӑкра 15-17 сехет кирлӗ. Ытларах пулсан вӗсем хаярланаҫҫӗ, пӗр-пӗрнипе ҫапӑҫма-сӑхма тытӑнаҫҫӗ.

Путенене йӑва кирлӗ мар, ҫӑмартине урайнех тӑвать. Унта утӑ, хӑҫат е йывӑҫ кӗрпи сармалла. Вӗсем вӗҫме те пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫи витти ҫемҫе кирлӗ.

Витери сывлӑш температури 16-25 градус ӑшӑ кирлӗ. 8 градуса чаксан путене вилме пултарать. Ӑна типӗ, вентиляци пур ҫӗрте усрамалла. Ҫил витӗр вӗрсен кайӑк-кӗшӗкӗн тӗкӗ тӑкӑнать, чирлет.

Ҫӑмарта тӑвакан чӑхсем валли хатӗрленӗ апат уншӑн та юрахлӑ. Унта минералсемпе витаминсем нумай. Енчен ӑна туянма май килмесен фураж, кукша пуҫ, вӗлтӗрен е топинамбур юрахлӑ. Хӗлле чӳрече ани ҫинче ҫитӗнтернӗ симӗс салат, шӑтнӑ тырӑ памалла. Уйрӑм валашкана шултра хӑйӑр е вӗтӗ чул хумалла – вӗсем хырӑмлӑха ӗҫлеттерме пулӑшаҫҫӗ. Кӑнтӑрла 2-3 хут апатлантармалла. Пӗр путенене 10-15 г апат ҫителӗклӗ. Ытлашши ҫитерсен ҫӑмарта япӑх тӑвать. Ун умӗнче таса, вӗретсе сивӗтнӗ шыв (пӳлӗмри температура) яланах тӑмалла. Хушшӑн-хушшӑн профилактика ирттерме манмалла мар. Шыва кӑштах марганцовка ярса памалла (кӗрен тӗслӗ пуличчен). Е пӗр таблетка левомицетина 1 стакан шывра ирӗлтермелле. Унтан 1:10 виҫепе шыв савӑтне ямалла. Сиплеме 1:2 виҫепе илмелле (1 пай левомицетин, 2 пай шыв).



# Кавӑн, кишӗр усӑллӑ

Сысна кавӑн юратать. Вӑл выльӑхшӑн усӑллӑ, ытларах сарӑ тӗсли. Унта каротин тата В витамин нумай. Кавӑн аппетита усать. Ӑна талӑкра 1-2 кг пани организма витаминпа пуянлатать. Ҫак пахчаҫимӗҫе сыснана вӗтетсе ҫитермелле. Самӑртма хупнӑскере тата амине чылайрах парсан та аван.

Сыснашӑн кишӗр те усӑллӑ. Кунта та каротин нумай. Ӑна ҫуса, вӗтетсе чӗрӗллех ҫитермелле.

Кӑшмана пӗҫернӗ хыҫҫӑн вӗтетмелле. Ҫанталӑк шӑрӑх чухне ҫӗрулмирен, тымар ҫимӗҫрен хатӗрленӗ апата пӗрре ҫитермелӗх ҫеҫ пӗҫермелле, унсӑрӑн вӑл йӳҫӗхет.

Сысна вӗлтӗрен те юратать. Ӑна париччен вӗри шывра пӑшӑхламалла. Типӗтнӗ вӗлтӗренре белок, каротин тата ытти минерал нумай.

Ҫак выльӑх шӑрӑхра шыв чылай ӗҫет. Унсӑр темиҫе сехет ҫеҫ пурӑнма пултарать. Шыв ҫитменрен вӑл япӑх ҫитӗнет.

# Бекон валли

Бекон валли сысна ӳстерме "эстонский беконный", "уржумский", "ландрас", "крупный белый", "литовский белый" ӑратсем суйласа илмелле. Вӗсем 20-25 кг пуҫласа 90-100 кг ҫитме пултараҫҫӗ. Бекон пахалӑхӗ апатран нумай килет. Рациона урпа, ыраш (вӑл рационра 45 процентран кая мар кирлӗ), вир кӗртмелле. Сыснана сӗлӗпе, куккуруспа, ҫуллӑ апатпа тӑрантарсан бекон пахалӑхӗ чакать. Ӑна хӑймасӑр сӗт уйрӑмах аван (пӗр выльӑх пуҫне 1–1,5 л).

ТĔПЕЛ

## Кабачок – томат соусĕпе

*Кирлĕ пулать: 3 кг кабачок (шултра, тăваткал турани), кирлĕ пулать: 0,5 л томат соусĕ, 0,5 л шыв, 1 стакан ӳсен-тăран çăвĕ, 1 стакан сахăр, 2 апат кашăкĕ тăвар, 100 г столовăй уксус.*

Пурне те кабачокпа пĕрле савăта ярса хутăштармалла, 30 минут вĕретмелле. Унтан 300 г вĕтетнĕ ыхра, хаяр пăрăç (çуррине) хушса татах 15 минут вĕретмелле. Хаяр пăрăçа кăларса илмелле, хатĕр салата стерилизациленĕ банкăна тултармалла, хупмалла, хулăн япалапа хупламалла.

Пӳлĕмри температурăра та лайăх упранать. Аш, çĕрулми, рис валли хушма апат шутланать.

## Маринадланă ыхра

*Кирлĕ пулать: 1 кг ыхра, 600 мл шыв, 4 апат кашăкĕ сахăр, пĕрчĕллĕ хура пăрăç (7 шт.), тикĕт курăкĕ (10 шт.), 3 апат кашăкĕ уксус, 2 апат кашăкĕ тăвар.*

Ыхрана хуппинчен тасатмалла, шăлĕсене уйăрмалла. Савăта шыв, сахăр, тăвар, тикĕт курăкĕ (гвоздика), пĕрчĕллĕ пăрăç ярса вĕретмелле. Çулăм çинчен илсен уксус ямалла. 0,5 литрлă таса банкăна ыхра тултармалла, çиелтен маринад ямалла. Хупăлчине лайăх хупса сивĕ вырăна лартмалла, анчах холодильника мар. Икĕ уйăхран маринадланă ыхрана çиме юрать.

ВАК-ТĔВЕК

■ Хупах сĕткенне пуçа сĕрсен лĕкĕ пĕтет, çӳç илемлĕ те çемçе пулать.

■ Хупах сĕткенне алă-урана, пите сĕрсен хурт-кăпшанкă çыртмасть.

■ Тин татнă кăмпа кун каçа пăсăласран тăвар янă вĕри шывра сапмалла.

■ Плита çинчи тутăха пĕтерме вĕри ӳсен-тăран çăвĕпе сĕрмелле.

■ Аш арманĕн çĕççи мăкалсан унпа сухари авăртмалла.

■ Çăкăр сунтăхне кăштах тăвар хуни кăвакăшран упрать.



■ Çăмарта хуппи çăмăллăн тасалма пĕçернĕ чухне шыва кăштах тăвар ямалла.

УЯВ

## Панулми спасĕ



Çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче – Панулми спасĕ. Çак кун чиркӳре авалтанпах улма-çырлана, пыла, тырă пучахне кĕлĕ туса тасатаççĕ.

Спасчен улма çисен, ăна килçурта илсе кĕрсен аçа çапать тенĕ. Çавăнпа та панулми çиме юраман. Ачи-пăчи вилнĕ ашшĕ-амăшĕн пушшех те. Çакă пысăк çылăх шутланнă. Вĕсем уяв кун чиркӳре панулмие кĕлĕ туса тасаттарнă хыççăн ăна ачин вилтăпри çине кайса хунă. Халăхра çакнашкал ĕненӳ çӳрет: иккĕмĕш спасчен панулми çимен ашшĕ-амăшĕн ачине «леш тĕнчере» унпа хăналанă имĕш. Енчен те сывăх çыннисем çимĕçе уявччен тутаннă пулсан вĕсен тĕпренчĕкне вăл лекмен.

Çак кун кил-çуртра кукăль-икерчĕ пĕçернĕ, вĕсен ăшне панулми хунă.

## Укроп

Хĕлле валли укропа кĕске хумлă кăмакара та типĕтме пулать. Турилкке çине хут алшăлли сармалла, ун çине – симĕс укроп. Кăмакана 1 минут хĕртни те çителĕклĕ. Типсе çитеймесен тапхăр-тапхăрпа (15-30-шар çеккунт) типĕтмелле.

## Курăкпа варалансан

Тумтир симĕс курăкпа варалансан тăвар шĕвекĕпе сăтăрмалла: 2 стакан шыва 1 чей кашăкĕ кирлĕ.

## Чӳлмекри чечек

Пӳлĕмри чечеке куçарса лартнă чухне чӳлмек тĕпне губка хумалла, çиелтен тăпрапа хупламалла. Кун пек тусан тăпрара нӳрĕк ытларах упранать.

## Кукăль вăрттăнлăхĕсем



✓ Чуста муклашкаллă пуласран шыв, сĕт, алланă çăнăх ямалла.

✓ Алă айĕнче çĕпре пулмасан ун вырăнне çур стакан сăра е минерал шывĕ яма юрать.

✓ Кукăль ăшĕ валли хатĕрленĕ купăстана тураса вĕри шывра тытмалла, унтан 1-2 минута сивĕ шыва ямалла. Пăчăртаса шыва сăрăхтармалла, çатмара ăшаламалла. Капла тусан купăста тĕсне çухатмасть, тĕксĕмленмест.

✓ Кукăль ăшĕ валли рис пĕçернĕ чухне 1 апат кашăкĕ столовăй уксус ямалла, вăл шурă, кĕрпеклĕ пулать. Кăштах сĕт те хушма юрать.

✓ Çуса тасатнă панулмие кăштах уксус хушнă шывра тытмалла. Кун пек тусан вăл пĕçериччен те тĕксĕмленмест.

✓ Чуста кăпăшка та çемçе пултăр тесен пиçнĕ сивĕ çĕрулмине теркăласа ямалла (1 кг çăнăха 2-3 çĕрулми).

СЫВЛĂХ

## Тутлă та, сиенлĕ те



**УСĂЛЛĂ ЕНĔСЕМ**

АРПУС стресран хăтарать. Пĕверте, ват хăмпинче чул пуçтарăнасран сыхлать, çимĕçре магни пысăк пулнăран юн пусăмне чакарать.

ДЫНЯ организма токсинран, холестеринран тасатать. Хырăмлăха лайăх ĕçлеттерет. С тата PP витаминсемпе пуян, çавăнпа юн тымарне сиплет, ӳтпĕве çамрăклатать. Дынькăра кали нумай, вăл чĕрешĕн уйрăмах усăллă. Çимĕçри иннозит, кремни сыпăсене йĕркеллĕ тытма пулăшать. В ушкăнри витаминсем нумайран депрессирен хăтарать. Унта тимĕр те самай. Вăл вара юнри гемоглобин шайне ӳстерме пулăшать.

**СИЕНЛĔХĔ**

Арпусра гликемии индексĕ пысăк. Çавăнпа юнри сахăр шайне ӳстерет. Инсулина йĕркелет, аппетита уçать. Ăна нумай çиме юрамасть: кунне икĕ хутчен 3-4 касăк çини те çителĕклĕ. Сахăр шайĕ пысăккипе арпус диети çине куçни организмшăн сиенлĕ.

Колит, гастрит, пĕверте чул чухне, сахăр диабечĕпе чирлесен дыня çиме юрамасть.

Икĕ çимĕçре те нитрат шайĕ пысăк. Çавăнпа вĕсене çисе çăмăллăнах наркăмăшланма май пур. Ир пулса çитнĕ çимĕçсене туянма ан васкăр – вĕсене удобренипе ытлашшипех апатлантарнă. Çурла уйăхĕн иккĕмĕш çурринчен арпус çиме хăрамалла мар – çак вăхăт тĕлне вăл хăех, удобрени нумай хывмасăрах пиçсе çитет.

**НИТРАТ ПУРРИНЕ МĔНЛЕ ПĔЛМЕЛЛЕ?**

АРПУС. Çимĕçĕн çемçе пайĕ хĕрлĕ, вăрриисем шурă, пиçсе çитеймен; çемçе пайĕ хĕрлĕ-кăвак тĕслĕрех; лайăх арпусăн чĕлхемĕ шурă, химипе ӳстернин – сарă; çемçе пайĕнче хытăрах сарă, сарăрах хĕрлĕ хытă чăмăркκасем пурри (2 см) те токсин пуррине кăтартать.

ДЫНЯ. Шăрши пулмасан нитрат хутăшĕ пысăк (пулса çитнин кăштах техĕмлĕ шăршă пур, вăл вайлă пулсан – çимĕç ытлашшипех пиçнĕ). Хуппи çинче çутă сарă йĕр, вăрри хушшинче сăрă чĕлхем, йăрăм пур.

Арпуса хуппи таранах çимелле мар – ун çумĕнче токсин пур.

## Ырă шăршăллă милĕк

Ухмах йывăççинчен /багульник/ хатĕрленĕ милĕк ӳпке, тип пыр чирĕсемпе нушаланакансемшĕн аван. Унта эфир çăвĕ те пур. Вăл вара чирленĕ вăхăтра сурчăка шĕветсе лайăх тухма пулăшать.

Çак курăк ал-ура сыппи, çурăм шăмми ыратнине те иртерет. Унран хатĕрленĕ шĕвеке ыратакан вырăнсене сĕрмелле. Шăнса пăсăлсан, ӳсĕрсен, невралги, радикулит, ревматизм чирĕсенчен ухмах йывăççинчен хатĕрленĕ милĕкпе усă курмалла, анчах вăйлă çапăнмалла мар, çан-çурăма сăтăрмалла çеç. Эфир çăвĕ ӳт-тире лексе усă кӳтĕр. Çапăннă хыççăн милĕке тула илсе тухмалла, унсăрăн курăкри техĕмлĕ çусем пуçа ыраттарма пултараççĕ. Сиплĕскере чечеке лариччен пухмалла. Каярах пуçтарнисем çирĕп мар, çулçи тăкăнать.

## Кефирпа тип çу

Вар хытнинчен 1 стакан кефира 1 апат кашăкĕ тип çу ярса пăтратмалла, çывăрас умĕн ĕçмелле.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

СĂНАВСЕМ

❖ Иккĕмĕш спасра çанталăк мĕнле пулать – кăрлач уйăхĕнче те çавнашкал.

❖ Панулми спасĕпе Пукрав (юпа уйăхĕн 14-мĕшĕнче) пĕрешкел килеççĕ.

❖ Çак кун çанталăк типĕ пулсан кĕркунне те уяр пулĕ, çумăр çусан – йĕпе-сапана кĕт. Шăрăх çанталăк хĕл сивĕ пуласса пĕлтерет.

❖ Иккĕмĕш спасра çумăр çусан кăрлач уйăхĕнче юр нумай пулĕ.

❖ Панулми спасĕ хыççăн каçсерен сивĕтет.

❖ Çанталăк сивĕтнине тăрнасем те сисеççĕ. Çак кунран вĕсем çула тухаççĕ.

ТĔЛĔКСЕМ

● Вут курни – ăшăтасса.

● Вырăх-чĕрлĕх тĕлленни – чирчĕре.

● Ĕне – чире.

● Хĕрлĕ ĕне – пушара.

● Ĕне суни – укça килессе.

● Ĕçкĕ-çикĕ – çумăр çăвасса.

● Икерчĕ – ырра систерет.

● Йăран – чир-чĕре.

● Йĕп хуçăлни – савнирен уйрăласса.

● Йывăç касни – çын вилессе.

● Йытта вĕлерни – тăшмана пĕтерессе.

ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Эпĕ Валерий ятлă. 48 çулта. Хĕсметрен таврăннă ывăлпа ялта пурăнатăп, кил-çуртра газ кĕртнĕ. Ĕçлеме ӳркенместĕп, кирек хăш ĕçе те пурнăçлатăп. Пĕрле пурăнма хĕрарăм шыратăп. 45-48 çулсенче пулсан аван. Çак телефонпа шăнкăравлама пултаратăр: 8-927-996-51-30.

УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Çурла, 18 – кĕçнерникун | Çурла, 19 – эрнекун | Çурла, 20 – шăматкун | Çурла, 21 – вырсарникун | Çурла, 22 – тунтикун | Çурла, 23 – ытларикун | Çурла, 24 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 4.27 | 4.29 | 4.31 | 4.33 | 4.35 | 4.39 | 4.41 |
| | анать | 19.20 | 19.18 | 19.15 | 19.13 | 19.10 | 19.05 | 19.03 |
| Кун тăршшĕ | | 14.53 | 14.48 | 14.44 | 14.40 | 14.35 | 14.26 | 14.21 |
| УЙĂХ | тăхри | тулли уйăх (12.26) | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун |
| | | Шывтăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче | Вăкăр паллинче | Вăкăр паллинче |

**ГРАФИК размещения в газете «Хресчен сасси» на бесплатной основе агитматериалов зарегистрированных кандидатов, избирательных объединений в период избирательной кампании в Государственный Совет Чувашской Республики**

Жеребьевка состоялась 16 августа 2016 г.

| \ п/п | Наименование округа | Ф.И. О. зарегистрированных кандидатов | Дата публикации и номер места на 3 полосе | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | 25.08.16 | 1.09.16 | 8.09.16 | 15.09.16 |
| 1 | Юго-Западный №19 | Абликов Николай Николаевич | 24 | | | |
| 2 | Батыревский № 2 | Александров Станислав Юрьевич | 5 | | | |
| 3 | Вурнарский № 3 | Алексеев Вячеслав Валерьевич | 4 | | | |
| 4 | Вурнарский № 3 | Алексеева Кристина Олеговна | 9 | | | |
| 5 | Канашский № 5 | Аликберов Марат Владимирович | 10 | | | |
| 6 | Новоюжный № 15 | Андреев Александр Витальевич | 23 | | | |
| 7 | Чебоксарский № 11 | Андреев Александр Михайлович (1978 г.р.) | 19 | | | |
| 8 | Чебоксарский № 11 | Андреев Александр Михайлович (1950 г.р.) | 8 | | | |
| 9 | Урмарский № 6 | Андреева Ольга Юрьевна | 6 | | | |
| 10 | Канашский № 5 | Анисимова Людмила Альфредовна | 27 | | | |
| 11 | Западный № 18 | Антипов Владимир Иванович | 17 | | | |
| 12 | Урмарский № 6 | Антонов Антон Николаевич | 22 | | | |
| 13 | Юго-Западный № 19 | Аркадьев Владислав Иванович | 21 | | | |
| 14 | Ядринский № 9 | Артемьев Николай Семенович | 12 | | | |
| 15 | Новоюжный № 15 | Афанасьев Артем Константинович | 11 | | | |
| 16 | Шумерлинский № 10 | Афошин Владимир Михайлович | 18 | | | |
| 17 | Юго-Западный № 19 | Бадаева Елена Игнатьевна | 26 | | | |
| 18 | Шумерлинский № 10 | Балякина Надежда Васильевна | 20 | | | |
| 19 | Цивильский № 7 | Беккер Сергей Федорович | 7 | | | |
| 20 | Центральный № 17 | Белобаев Сергей Александрович | 25 | | | |
| 21 | Приволжски № 20 | Беляев Сергей Валерьевич | 33 | | | |
| 22 | Урмарский № 6 | Бикинина Ольга Витальевна | 30 | | | |
| 23 | Комсомольский № 4 | Васильев Александр Михайлович | 29 | | | |
| 24 | Юраковский № 22 | Васильев Павел Сергеевич | 3 | | | |
| 25 | Заводской № 12 | Верин Евгений Владимирович | 28 | | | |
| 26 | Урмарский № 6 | Викторов Александр Юрьевич | 1 | | | |
| 27 | Центральный № 17 | Викторов Владимир Николаевич | 2 | | | |
| 28 | Вурнарский № 3 | Владимиров Владимир Анатольевич | 31 | | | |
| 29 | Винокуровский № 21 | Владимиров Евгений Николаевич | 16 | | | |
| 30 | Новоюжный № 15 | Горбунов Евгений Владиславович | 14 | | | |
| 31 | Восточный № 14 | Данилов Григорий Владиславович | 32 | | | |
| 32 | Юраковский № 22 | Дарчиев Давид Альбертович | 13 | | | |
| 33 | Восточный № 14 | Дельман Олег Александрович | 15 | | | |
| 34 | Шумерлинский № 10 | Дмитриева Любовь Григорьевна | | | 15 | |
| 35 | Винокуровский № 21 | Дряблов Владимир Алексеевич | | | 30 | |
| 36 | Алатырский № 1 | Ефремов Николай Николаевич | | | 29 | |
| 37 | Ядринский № 9 | Жукова Анастасия Александровна | | | 32 | |
| 38 | Западный № 18 | Зюзин Константин Иванович | | | 23 | |
| 39 | Урмарский № 6 | Иванов Валерий Николаевич | | | 33 | |
| 40 | Моргаушский № 8 | Иванов Игорь Николаевич | | | 11 | |
| 41 | Канашский № 5 | Иванов Олег Пантелеймонович | | | 31 | |
| 42 | Южный № 13 | Игнатьев Андрей Иванович | | | 14 | |
| 43 | Заводской № 12 | Ильин Виктор Алексеевич | | | 16 | |
| 44 | Цивильский № 7 | Ильин Евгений Васильевич | | | 10 | |
| 45 | Центральный № 17 | Калмыков Ильдар Шиазатович | | | 19 | |
| 46 | Новоюжный № 15 | Каляев Роман Евгеньевич | | | 27 | |
| 47 | Центральный № 17 | Капитонов Никита Сергеевич | | | 2 | |
| 47 | Комсомольский № 4 | Каширин Николай Аркадьевич | | | 17 | |
| 49 | Южный № 13 | Киргизов Николай Александрович | | | 1 | |
| 50 | Шумерлинский № 10 | Кириллов Игорь Павлович | | | 3 | |
| 52 | Юраковский № 22 | Колесников Евгений Святославич | | | 12 | |
| 52 | Моргаушский № 8 | Кондратьева Татьяна Петровна | | | 18 | |
| 53 | Канашский № 5 | Краснова Нина Витальевна | | | 25 | |
| 54 | Канашский № 5 | Ксенофонтов Юрий Валерианович | | | 26 | |
| 55 | Винокуровский № 21 | Куницин Евгений Николаевич | | | 20 | |
| 56 | Цивильский № 7 | Курчаткин Николай Григорьевич | | | 8 | |
| 57 | Алатырский № 1 | Лукин Николай Николаевич | | | 4 | |
| 58 | Юраковский № 22 | Майоров Антон Олегович | | | 21 | |
| 59 | Заводской № 12 | Макаров Виктор Николаевич | | | 13 | |
| 60 | Юго-Западный № 19 | Маков Наил Асфандиарович | | | 5 | |
| 61 | Ядринский № 9 | Малов Николай Владимирович | | | 24 | |
| 62 | Моргаушский № 8 | Маряшкин Николай Самуилович | | | 9 | |
| 63 | Шумерлинский № 10 | Мельников Сергей Владимирович | | | 28 | |
| 64 | Батыревский № 2 | Мешков Олег Вадимович | | | 6 | |
| 65 | Канашский № 5 | Мифтахутдинов Кияметдин Садыртдинович | | | 22 | |
| 66 | Винокуровский № 21 | Михайлов Владимир Юрьевич | | | 7 | |
| 67 | Юраковский № 22 | Михайлов Григорий Александрович | | 14 | | |
| 68 | Цивильский № 7 | Михайлов Михаил Владимирович | | 31 | | |
| 69 | Юраковский № 22 | Михеев Сергей Петрович | | 29 | | |
| 70 | Западный № 18 | Моляков Андрей Викторович | | 1 | | |
| 71 | Приволжский № 20 | Моляков Игорь Юрьевич | | 33 | | |
| 72 | Приволжский № 20 | Нарышкин Игорь Михайлович | | 8 | | |
| 73 | Алатырский № 1 | Немкова Мария Павловна | | 13 | | |
| 74 | Приволжский № 20 | Николаев Николай Станиславович | | 27 | | |
| 75 | Ядринский № 9 | Николаев Олег Алексеевич | | 17 | | |
| 76 | Канашский № 5 | Никоноров Эраст Юрьевич | | 7 | | |
| 77 | Привокзальный № 16 | Овсепян Хачатур Владимирович | | 3 | | |
| 78 | Заводской № 12 | Павлов Валерий Игнатьевич | | 16 | | |
| 79 | Центральный № 17 | Павлов Олег Александрович | | 28 | | |
| 80 | Вурнарский № 3 | Павлов Сергей Владимирович | | 19 | | |
| 81 | Привокзальный № 16 | Паутов Олег Владимирович | | 4 | | |
| 82 | Южный № 13 | Петров Александр Николаевич | | 24 | | |
| 83 | Батыревский № 2 | Петров Федор Валерьевич | | 15 | | |
| 84 | Западный № 18 | Петров Эдуард Геннадьевич | | 12 | | |
| 85 | Комсомольский № 4 | Попов Юрий Алексеевич | | 32 | | |
| 86 | Алатырский № 1 | Пшеничная Алла Александровна | | 9 | | |
| 87 | Чебоксарский № 11 | Рафинов Вячеслав Викторович | | 30 | | |
| 88 | Приволжский № 20 | Романова Любовь Мефодьевна | | 18 | | |
| 89 | Юго-Западный № 19 | Сапожников Алексей Юрьевич | | 20 | | |
| 90 | Привокзальный № 16 | Сапрыкин Антон Владимирович | | 2 | | |
| 91 | Вурнарский № 3 | Свешников Владимир Васильевич | | 23 | | |
| 92 | Батыревский № 2 | Селиванов Николай Васильевич | | 21 | | |
| 93 | Урмарский № 6 | Селюнин Александр Александрович | | 5 | | |
| 94 | Винокуровский № 21 | Семенов Сергей Леонидович | | 22 | | |
| 95 | Винокуровский № 21 | Семенов Андрей Андреевич | | 6 | | |
| 96 | Новоюжный № 15 | Семенов Вячеслав Николаевич | | 10 | | |
| 97 | Винокуровский № 21 | Семенов Сергей Павлович | | 26 | | |
